


НИ КОМПЬЮ СУПЕРМ

ПОДАРОК – ПРИ ПОКУПКЕ КОМПЬЮТЕРА

п. Ибреси, ул. Садовая, д. 7 /Дом быта/, 2 этаж, телефон: 2-22-62.

КРЕДИТ

www.nix.ru



Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӰШĔН

Шăматкун 2007 çурла, 11

64 /8981/№

Хаçат 1932 çултанпа тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес: ibresi@press.cap.ru


**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Спорт çынна вăйлă, хитре, хăюллă тăвать, çĕнтерӳ патне туртăнас вăйне ӳстерет, тĕллев патне ăнтăлма хал парать. Спорт вăл – сывлăх, сывлăхлă наци вара – çирĕп патшалăх.

Чăваш Ен – спорт республики. Пирĕн ентешсем хушшинче професиллĕ спортсменсем çав тери нумай, вĕсем тĕнчене, çĕршыва чапа кăларнă. Эпир олимпиада чемпионĕсен çĕнтерĕвĕсемпе мухтанатпăр, вĕсен пĕрремĕш пулас туртăмĕ вара çамрăк ăрушăн тивĕçлĕ тĕслĕх пулса тăрать.

Спорт стильне тата сывă пурнăç йĕркине кăмăллакан çынсен йышĕ Чăваш Енре хушăнсах пырать. «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ», «Наци кросĕ» спорт акцийĕсене çулсеренех республикăра пурăнакан тĕрлĕ ӳсĕмсенчи вуншар пин çын хутшăнать. Паян Чăваш Енре физкультурăпа тата спортпа массăллăн туслашмалли майсем анлăлансах пыраççĕ. Хуласемпе саласенче спорт залĕсемлĕ, бассейнсемлĕ капмар та хăтлă спорт керменĕсем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Юлашки икĕ çулта физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли 6 комплекс туса лартнă, кăçал çакăн йышши тепĕр 5 кермен хута каймалла, 2010 çул тĕлне вара вĕсен шучĕ 30-а яхăн пулать.

Чăваш Ен час-часах Пĕтĕм Раççей шайĕнчи спорт ăмăртăвĕсене тата тĕнче масштабĕллĕ чемпионатсене ирттермелли вырăн пулса тăрать. Малашлăхра Шупашкара тĕнчери 70е яхăн çĕршывран спортсменсем килсе çитмелле. Чăваш Ен тĕп хулинче 2008 çулта тĕнче Кубокне çĕнсе илессишĕн хăвăрт утакансен ăмăртăвĕсем пулмалла, ăна пĕтĕм тĕнче сăнаса тăрĕ.

Мĕнпур спортсменсене, тренерсене, спорт шкулĕсен вĕрентекенĕсене, спорта юратакансене пĕтĕм чун-чĕререн Физкультурниксен кунĕ ячĕпе саламлатăп! Спортра çĕнĕ çитĕнӳсем тата çĕнтерӳсем сунатăп.

***Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.***

**ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ, ОТРАСЛЬ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пĕтĕм кăмăлтан професси уявĕ ячĕпе – Строитель кунĕпе саламлатăп! Юлашки çулсенче Чăваш Республики пурăнмалли çурт-йĕр тăвассинче лидер пулса тăчĕ. Инфраструктура активлă аталанать. Строительствăра çĕнĕ технологисемпе, материалсемпе усă кураççĕ. Сирĕн профессиллĕ паха опытпа паллашма кӳршĕллĕ вырнаçнă республикăсенчен кăна мар, Раççейĕн нумай регионĕсенчен, ют çĕршывсенчен килсех тăраççĕ.

Эсир тăрăшса ĕçленине пулах пирĕн Чăваш Республикинче пурăнакан çынсем хăтлă хваттерсемлĕ пулса тăраççĕ. Сирĕн ĕçчен аллăрсем пирĕн пӳртсене хитре те ăшă тăваççĕ.

Чăваш строителĕсен маркине ӳлĕмрен те çӳлтех тытасса çирĕп шанатăп эпĕ. Ĕçре ăнăçусем, сире тата сирĕн çемйĕрсене телей те тăнăçлăх сунатăп.

***РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци членĕ Павел СЕМЕНОВ.***

**ХИСЕПЛĔ ФИЗКУЛЬТУРĂНА ВĔРЕНТЕКЕНСЕМ, ТРЕНЕРСЕМ ТАТА СПОРТА ЮРАТАКАНСЕМ!**

Чун-чĕререн сире Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Раççейре тата Чăваш Республикинче физкультурăпа массăллă спорта аталантарас ĕç çине пысăк тимлĕх хураççĕ. 2014 çулхи хĕллехи Олимп вăййисене Сочире ирттерме йышăннине наци çĕнтерĕвĕ тесех палăртмалла. Çитес çул вара пирĕн республика тĕп хулинче хăвăрт утакансен Тĕнче Кубокĕ иртет. Чăваш Ен спортсменĕсем спортра пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ, пĕтĕм тĕнчери спорт арени çинчи çĕнтерĕвĕсемпе республикăна чапа кăлараççĕ. Çак çитĕнӳсенче – тренерсен тăрăшулăхĕ пысăк.

Професиллĕ спортсменсене тата спорта юратакансене Физкультурник кунĕ ячĕпе чунтан саламлас килет, вăрăм кун-çул пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, çĕнĕ çитĕнӳсем сунатăп.

***РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци членĕ Павел СЕМЕНОВ.***

**ХИСЕПЛĔ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕМ, СПОРСТМЕНСЕМ, ТРЕНЕРСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНСЕМ!**

Сире пĕтĕм кăмăлтан Физкультурниксен кунĕ ячĕпе саламлатăп! Физкультурăпа, спортпа туслă пулни çынна савăнăç, сывлăх кӳрет, вăй-хал хушать. Çавăнпа сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассине, массăллă спорта аталантарассине пирĕн районта малти вырăна хураççĕ. Массăллă халăха явăçтаракан спорт ăмăртăвĕсем тăтăшах пулаççĕ районта, унта тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем çĕнтерӳ туптаççĕ.

Районти спортсменсем республика шайĕнчи тупăшусенче призлă вырăнсем йышăнаççĕ, районтан тухнă спортсменсем Чăваш Ен чысне çĕклеççĕ. Эпир вĕсемпе тивĕçлипех мухтанатпăр. Сире пурсăра та çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

***Йĕпреç районĕн пуçлăхĕ А. ПЕТРОВ.***

**...Строительсен професси уявĕ умĕн, Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров отрасльти кĕçĕн командирсен йышĕпе – бригадирсемпе, звеносемпе тата мастерсемпе тĕл пулнă. Канашлу Правительство çурчĕн Пысăк залĕнче иртнĕ. Республика ертӳçи Чăваш Ене пысăк стройка туса хунă ăста алăллă çынсен ячĕпе ăшă сăмах нумай каланă. Çав ăнăçусем вĕсем – Президентпа Правительство тăрăшнипе строительство ĕçĕнче пĕлсе йĕркеленĕ политика кăтартăвĕ.**



# ФОК вăхăтра ĕçе кĕрĕ

Хуласенче кăна мар, район центрĕсенче те пĕлĕтелле кармашакан башня кранĕсене курсан чун савăнать. Вĕсем, паянхи куна илсен, халăх пурăнакан вырăнсен сăн-сăпатне палăртакан пейзажсем. Йĕпреç поселокĕнче те çав ӳкерчĕкех. Райцентра Буинск енчен пырса кĕнĕ çĕрте, сылтăм енче физкультурăпа спорт комплексĕн пулас объекчĕн корпусĕсем çĕкленнине кирек кам та асăрхамасăр иртеймĕ. Унăн генеральнăй подрядчикĕ – «Голицын» холдинг компанийĕ. Ку вырăн тĕрлĕ енчен питех те лайăх курăнать, апла-тăк, çĕнĕ объектăн тавралăх интерьерне «хитрелетес» ĕçре пĕлтерĕшĕ пысăк. Унпа юнашарах – Никольски чиркĕвĕ. Çӳлти хуçа хăй строительсене çине тăрса ĕçлеме вăй-хал парса тăрать тейĕн, вĕсем кĕске хушăрах виç хутлă çуртăн кăшкарне хăпартса лартма пултарнăран пуçа ирĕксĕрех çавăн пек шухăш пырса кĕрет. Кунти рабочисен ĕçĕ-хĕлĕпе пире участок прорабĕ Андрей Андреевич Кипайкин паллаштарчĕ. Вăл пысăк стажлă строитель, кунашкал объектсене пĕрре кăна мар çĕклесе лартнă. Тĕслĕхрен, Улатăрти комплекса.

***(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).***

**РАЙОНТИ СТРОИТЕЛЬСТВО ОТРАСЛĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пĕтĕм чун-чĕререн Строитель кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Сирĕн ĕçчен аллăрсене пула пирĕн тăван тăрăх инфраструктури аталанса илемленет, çынсем хăтлă та ăшă хваттерсене пурăнма куçаççĕ, çĕнĕ социаллă объектсем çĕкленеççĕ. Строительсен тăрăшулăхне пулах район центрĕн, ялсемпе поселоксен сăн-сăпачĕ улшăнса çĕнелет. Сирĕн умра татах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ паянхи кун, халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе çĕнĕ объектсем тумалла, тасату сооруженийĕсене çĕклемелле тата ытти те.

Сире çăмăл мар ĕçе кӳленнĕшĕн, ăсталăхшăн тата професcие чунтан парăннăшăн тав тăватăп. Районта пурăнакан халăх ырлăхĕшĕн татах та нумайрах ĕç тума çирĕп сывлăх, ăнăçусем сунатăп.

***Йĕпреç районĕн пуçлăхĕ А. ПЕТРОВ.***

## ПОКАЗАТЕЛИ МЕХАНИЗАТОРОВ НА ПОДЪЕМЕ ЗЯБИ /на 8.08.07 г./

| Ф. И. О. механизатора | Хозяйства | Марка тр |
|---|---|---|
| Иванов А. А. | «Красный партизан» | Т-150 |
| Петров Н. В. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Егоров П. А. | им. Калинина | ВТ-150 |
| Иванов В. В. | «Патман» | Т-150 |
| Русское В. М. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Тихонов А. Н. | «Искра» | МТЗ-1221 |
| Одинцов Н. Л. | им. Ильича | ДТ-75 |
| Степанов В. М. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Гаврилов А. Н. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Васильев М. К. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Одинцов С. В. | им. Ильича | ДТ-175 |
| Константинов А. В. | им. Калинина | МТЗ-82 |
| Иванов В. Н. | ОАО «Рассвет» | ДТ-75 |
| Сорокин Д. Н. | «Искра» | Т-150 |
| Егоров Ю. А. | им. Калинина | ДТ-75 |
| Абдюшев Г. А. | им. Калинина | ДТ-75 |
| Никитин В. А. | «Патман» | МТЗ-82 |
| Иванов С. Н. | ОАО «Рассвет» | ДТ-75 |
| Федоров В. Ф. | «Красный фронтовик» | ДТ-175 |

## ЭКРАН СОРЕВНОВАНИЯ КОМБАЙНЕРОВ /на 8.08. 07 г./

| Ф. И. О. комбайнера | Хозяйства | Марка ко |
|---|---|---|
| Шаршевич В. Ф. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Никитин А. Н. | «Патман» | Енисей |
| Шибаев Ф. М. | «Красный партизан» | Дон-1500 |
| Васильев В. Н. | «Красный партизан» | Дон-1500 |
| Белов В. Р. | «Красный фронтовик» | Енисей |
| Гордеев В. И. | им. Ильича | Дон-1500 |
| Сюдамов С. А. | им. Ильича | СК-5 Нива |
| Карпов В. Е. | «Искра» | СК-5 Нива |
| Григорьев В. Н. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Тихонов А. Н. | «Искра» | СК-5 Нива |
| Чандров И. И. | им. Калинина | Енисей |
| Ярзунов Н. Р. | ЗАО АФ «Ибресинская» | СК-5 Нива |
| Анисимов О. Д. | им. Ильича | СК-5 Нива |
| Петров А. В. | им. Калинина | СК-5 Нива |

# «ПĔРЛĔХЛĔ РАÇÇЕЙ» САСĂЛАВА ÇУЛ ПАЧĔ

**«Пĕрлĕхлĕ Раççей» /«Единая Россия»/ парти çитес суйлава Путин планĕпе пырса кĕрет. Ку вăл – пирĕн программа, пирĕн стратеги. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» çак стратегие тытса пыма тивĕçлĕ кадрсен резервне хатĕрлет. Кадрсен резервне суйласа илсе туса хурасси – тĕп критери. Унта кĕме тивĕçлĕ кандидатăн профессионализмне, регионта авторитетлă пулнине, çынлăха палăртакан пахалăхĕ пысăк пулнине шута илеççĕ.**

Списоксенче пĕтĕмпе 1200 ытла çын, вĕсене партин регионсенчи уйрăмĕсемпе общественлă организацисем сĕннипе резерва тăратнă. Чăваш Енпе илсен, çав списока 11 çынна кĕртнĕ.

Нумаях пулмасть «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Кадрсен резервĕнчи кандидатсемпе тата вырăнти уйрăмсен 26 представителĕпе тĕлпулу пулса иртнĕ. Çапла вара парти сасăлавĕ Чăваш Енре старт илнĕ.

Çурла уйăхĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа 22-мĕшĕччен республикăри пур хуласемпе районсенче те партин кадрсен резервĕнчи кандидатсене пăхса тухаççĕ, сӳтсе яваççĕ. Аса илтеретпĕр, списокра пирĕн республикăран çаксем тăраççĕ:

– Чăваш Ен Президенчĕ Николай Васильевич Федоров;

– Чăваш Патшалăх Канашĕн председателĕ Михаил Алексеевич Михайловский;

– Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин халăхсем хушшинчи ĕçсен комитечĕн председателĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Генеральнăй Канашĕн Президиумĕн секретарĕн çумĕ Константин Иосифович Косачев;

– Патшалăх Думин депутачĕ Павел Владимирович Семенов;

– Раççей Геройĕ, летчик-космонавт Николай Михайлович Бударин;

– Раççей Геройĕ Евгений Германович Борисов;

– Президентăн перинаталь центрĕн тĕп врачĕ Алла Владимировна Самойлова;

– Патăрьел районĕн депутатсен Пухăвĕн председателĕ, «Малалла» ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи Михаил Владимирович Петров;

– виççĕмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн культура, вĕрентӳ, наука тата наци политики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Елена Дмитриевна Сергеева;

– Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Çĕмĕрлери пуçламăш уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ Ильяс Гиназатович Калмыков;

– Шупашкар районĕнчи Кукеç ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕ Алексей Владимирович Юрьев.

Парти сасăлавĕн тĕп тĕллевĕ – кадрсен резервне кĕме тивĕçлĕ чи пултаруллă парти членĕсене тупса палăртасси тата вĕсене ертсе пыракан парти должноçĕсен карталашки тăрăх хăпарса пыма пулăшасси, влаç органĕсене суйланмашкăн кандидата тăратасси тата ыт. те. Хальхи тĕлпулăва çавăн пекех «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партипе çыхăну тытакан общественлă организацисен представителĕсене, соратникĕсене, партнерĕсене чĕннĕ.

«Парти членĕсем хушшинчи сасăлав – Раççейри партисен тытăмĕнче çĕнĕ событи, – тесе палăртнă «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин пирĕн регионти политика канашĕн секретарĕ Михаил Михайловский. – Сасăлав парти ăшĕнче пулса иртет пулин те, вăл ытти мĕнпур çынсемшĕн уçă, общество шухăшне шута илесси тĕп вырăнта тăрать. Эпир кандидатсен списокне республикăра тухакан «Пĕрлĕхлĕ Раççейпе» («С Единой Россией») парти хаçатĕнче уççăн пичетлесе кăлартăмăр, ытти партисемшĕн кун пек уççăнлăх ют. Эпир вара сирĕнпе кандидатсене кашни район шайĕнче, партин вырăнти кашни уйрăмĕнче сӳтсе явма пултаратпăр».

М. Михайловский çакна палăртнă, пĕтĕм тĕнчипех паллă çынсемпе – Николай Федоров Президентпа, Патшалăх Думин халăхсем хушшинчи ĕçсен комитечĕн председателĕпе Константин Косачевпа, Патшалăх Думин депутачĕпе Павел Семеновпа танах списокра çĕнĕ çынсен ячĕсем те курăнаççĕ, вĕсем хăйсем пурăнакан, ĕçлекен вырăнта хăйсен халăхшăн тăрăшас пултарулăхне туллин кăтартса панă, халĕ вара вĕсен татах та анлăрах масштабпа хăйсене кăтартса пама май пур. Вĕсен хушшинче çамрăксем те пур, парти вĕсене хăйсене кăтартса пама çул уçса парать, вĕсене валли резерв списокĕнче 20 процент чухлĕ квота панă.

Çамрăк кандидатсен списокĕнче Чăваш Енрен Раççей Геройĕ ятне илнĕ Евгений Борисов та, «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн çамрăксен Гвардийĕ» федераци шайĕнче иртнĕ конкурсĕн çĕнтерӳçисем Ильяс Калмыковпа Алексей Юрьев та пур.

Партири сасăлав вырăнти уйрăмсенчи пултаруллă кандидатсене тупса палăртма пулăшмалла. Кăтартусем тăрăх хăш кандидатсене суйласа илни çинчен регионти политканашăн çурла уйăхĕн вĕçĕнче иртекен ларăвĕнче йышăну тăваççĕ.

М. Михайловский палăртнă тăрăх, юлашкинчен, çĕршывĕпе илсен, 600 çынна суйласа илеççĕ, вĕсем парти съезчĕ иртнĕ хыççăн, Патшалăх Думин депутачĕн кандидачĕн статусне илеççĕ.

Общественлă организацисен представителĕсем палăртнă тăрăх – «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш Енри списокĕнче»... республика элити, социаллă яваплăх тĕлĕшĕпе илсен, пĕтĕм Раççей, Чăваш Ен ырлăхĕшĕн эффективлă ĕçлеме пултаракан элита». Вĕсем тĕрлĕ категори çыннисем обществăн мĕнпур сийĕсен представителĕсем.

Çак тĕлпулурах М. Михайловский «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин çĕнĕ членĕсене партбилетсем панă.



# ЙĔПРЕÇ, ЮРЛАТПĂР САН ÇИНЧЕН!

**Çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче Йĕпреç хăйĕн çуралнă кунне паллă турĕ. Вăл 114 çул тултарчĕ. Уяв чукун çул çинче ĕçлекенсен кунĕпе тĕл килни пĕрре те ăнсăртран мар. Йĕпреç шăпах чукун çул станцийĕнчен пуçланса кайнине шута илсен, икĕ уява пĕрле паллă туни питех те вырăнлă.**



Район центрĕнчи культурăпа кану паркне капăр сăн кӳнĕ. Сценăна та хӳхĕм илемлетнĕ. Савăк музыка вылять. Флагштоксем çинче – Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республикин патшалăх ялавĕсем. Парк территорийĕнче – «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») символикине палăртса тăракан ялавсемпе вĕсен тăсăмĕсем. Уява килнĕ хăнасене Йĕпреç хула тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. А. Андреев кĕтсе илет. Вĕсен хушшинче – РФ Патшалăх Думин депутачĕ П. В. Семенов, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ертӳçин çумĕ – ял хуçалăх министрĕ М. В. Игнатьев, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш регион уйрăмĕн регионти ĕç тăвакан комитечĕн ертӳçи Г. Г. Николаева т. ыт. те.

Уява ертсе пыракан Ирина Федорова хăнасене, район ертӳçисене сцена çине улăхма йыхравлать. Йĕпреç хула тăрăхĕн пуçлăхĕ савăнăçлă митинг уçăлни çинчен пĕлтерет. Уçланкăра Чăваш Республикин Гимнĕ янраса каять. Поселок мэрĕ хăйĕн вăрăмах мар сăмахĕнче Йĕпреç историйĕ çинче кĕскен чарăнса тăчĕ, унăн паянхи ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Предприятисем, поселок кунне кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, кашниех ӳсĕм-çитĕнӳ тума тăрăшнă.

Микрофон умĕнче хаклă хăна – ЧР Министрсен Кабинечĕн Ертӳçин çумĕ – ял хуçалăх министрĕ М. В. Игнатьев. Вăл йĕпреççене хăйĕнчен, Николай Федоров Президентран, Президент Администрацийĕнчен ăшă салам каларĕ. Михаил Васильевич республикăн социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарма Йĕпреç поселокĕнчи çынсем сумлă тӳпе хывнине уйрăммăн палăртса каларĕ. М. В. Игнатьев Йĕпреçри культура çурчĕн хормейстерне Геннадий Григорьевич Степанова «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панине çирĕплетекен ĕнентерӳ хутне пачĕ, кăкăрĕ çине награда паллине çакса ячĕ. Вăлах культура çурчĕн халăх хорне (ертӳçи – Валентин Кузнецов) ял туризмĕн ыйтăвĕсемпе иртнĕ Пĕтĕм Раççейри семинара лайăх хатĕрленсе ирттерсе яма пулăшнăшăн ЧР Физкультурăпа спорт тата туризм министерствин тав çырăвне пачĕ.

РФ Патшалăх Думин депутатне П. В. Семенова пĕлеççĕ йĕпреççем. Уява пушă алăпа килмен депутат. Вăл район центрĕнчи «радуга» ача садĕнче вылямалли площадка тума укçа-тенкĕпе пулăшнă иккен. Ӳлĕмрен те спонсор пулăшăвĕ парасси çинчен шантарса пĕлтерчĕ Павел Владимирович.

Район пуçлăхĕ А. И. Петров уяв халăхне чаплă праçник ячĕпе саламланă май, ӳлĕмрен пĕрлехи вăйпа татса памалли пысăк тĕллевлĕ ĕçсене уçса пачĕ. Анатолий Иванович Григорий Федоровичпа Галина Ивановна Кольцовсене тата «Рябинка» ача сачĕн воспитательне Любовь Васильевăна поселокăн общество пурнăçне пуçаруллăн хутшăннăшăн районăн Хисеп грамотисене парса чыс турĕ.

Уявăн сумлă хăнисем – чăваш Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. В. Свешников тата «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин регионти уйрăмĕн ĕç тăвакан комитечĕн ертӳçи Г. Г. Николаева каланă ăшă сăмахсем те çынсен кăмăлĕсенче ыра туйăмсем хăварчĕç.

Йăлана кĕнĕ йĕркене тĕпе хурса, «Йĕпреç поселокĕн хисеплĕ гражданинĕ» ята тивĕçнисен çемйине те тата икĕ çын хушăнчĕ çав кун: поселокри чи ватă çынсенчен пĕри, педагогика ĕçĕн ветеранĕ Аверкий Федорович Филипповпа район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, çывăх вăхăтрах утмăл тултаракан Вячеслав Людвикович Михалик тивĕçлĕ пулчĕç ку хисепе...

*(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).*

**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** сцена çинче ветерансен халăх хорĕ; уява уçнă самант; пĕтĕмĕшле врач практикин Черноречкăри офисĕн ертӳçи О. Ямуткова «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Тав çырăвне тивĕçнĕ; Йĕпреç поселокĕн хисеплĕ гражданинĕ А. Филиппов.





# ПОСЕЛОКĂН ÇУРАЛНĂ КУНĔНЧЕ ÇĔНĔ ÇЕМЬЕÇЕМ ÇУРАЛЧĔÇ

**Иртнĕ шăматкун районта пурăнакансем район центрĕн – Йĕпреç поселокĕн çуралнă кунне паллă турĕç. Тăван Йĕпреçĕмĕр 114 çул тултарчĕ.**

Юбилейлă çул мар пулин те, уяв сĕмĕ юбилейринчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Хăнасем чылай пухăннă уява, республика тĕп хулинчен те, кӳршĕллĕ вырнаçнă хуласемпе районсенчен те пуçтарăннă халăх. Сумлă хăнасем йĕпреçсене уяв ячĕпе саламларĕç, симĕс поселока чечекленсе пыма ырлăх сунчĕç.

Поселок çуралнă кунне паллă тунă кунах çамрăксем мăшăрланасси те йăлана кĕрсе çитрĕ юлашки çулсенче. Район администрацийĕн ЗАГС пайĕн ертӳçи Татьяна Мородина пĕлтернĕ тăрăх, çав кун вăл 7 мăшăра савăнăçлă лару-тăрура регистрациленĕ.

Районта ӳссе çитĕннĕ Валерий Анисимовпа Николай Ярчеев Патăрьел районĕнчи хĕрсене кăмăлланă, вĕсемпе пĕрлешсе çемье çавăрчĕç. Сергей Васильев Канаш районĕн хĕрĕпе мăшăрланчĕ. Буинск поселокĕнче çуралса ӳснĕ Леонид Рязановпа Наталия Каймакова хальхи вăхăтра Нефтеюганск районĕнчи Сингапей поселокĕнче ĕçлесе пурăнаççĕ пулин те, хăйсен туйне тăван тăрăхра, çывăх çыннисемпе, юлташĕсемпе пĕрле паллă тума кăмăл тунă. Регистраци кунĕ тепĕр виçĕ çĕнĕ çемьешĕн те асра яланлăхах юлĕ: кунĕ питĕ аван пулчĕ-çке. Германпа Ирина Васильевсем, Николайпа Наталья Филипповсем, Александрпа Татьяна Григорьевсем çемье чăмăртаса пурнăç çулĕпе пĕрле утма тупа туса пĕр-пĕрне ылтăн çĕрĕсем тăхăнтартрĕç. Çамрăк мăшăрсем çав кун Черноречка пĕви çийĕпе вĕçтернĕ фейерверка пăхса киленчĕç. Ку илеме курма мĕнпур поселок пуçтарăннă. Ваттисем те ачасем пекех савăнчĕç.

***РАЙАДМИНИСТРАЦИ САЙТĔНЧЕН.***



# ФОК вăхăтра ĕçе кĕрĕ

*(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).*

– Йĕпреçе кăçалхи нарăсăн 27-мĕшĕнче çитрĕм, – çапла пуçларĕ калаçăвне Андрей Андреевич. – Хамăра мĕн таран пысăк ĕç кĕтсе тăнине лайăх ăнланнă. Пĕр çын пек пулса тытăнтăмăр çĕнĕ ĕçе. Çавăнпа пĕрлех яваплăха та туйса тăнă. Ара, эпир мĕнлерех ĕçленине Николай Васильевич Федоров Президент хăй тĕрĕслет-çке.

Прорабăн ĕç сĕтелĕ çинче пулас керменĕн проекчĕ выртать. Ăна алла илмен сехет иртмест унăн. Паянхи куна мĕн палăртса хунин 45 процентне пурнăçланă строительсем. Çу кунĕсенче хăвăртлăх палăрмаллах ӳснĕ. Улатăртан, Çĕнĕ Шупашкартан, ытти çĕртен килнĕ каменщиксем, бетонщиксем, платниксем ытти специальноç çыннисем килĕштерсе ĕçлеççĕ пĕр-пĕринпе. Юлашки вăхăтра вырăнти çамрăксем те хутшăнаççĕ строительсен çемйине. Йĕпреçсем вырăнта ĕç çуккипе, ушкăнăн-ушкăнăн Мускава, çĕршывăн ытти кĕтесĕсене туха-туха кайни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Стройкăра ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулни уçăмлăн сисĕнет. Кашни планеркărах кадр ыйтăвне хускатаççĕ. Сантехниксем, металл конструкцийĕсемпе ĕçлекен монтажниксем çитмеççĕ. «Ик-виçĕ çыншăн тар кăларма тивет», – терĕ Андрей Андреевич.

Объект патĕнче кирпĕч хуракансен бригадине ырăпа асăннине пĕрре кăна мар илтрĕмĕр. Ăна Улатăртан килнĕ Сергей Михайлович Захаров ăста специалист ертсе пырать. Владимир Ильич Абрамов мастера шанса панă ушкăн та питĕ тăрăшуллă. «Анлă тавракурăмлă специалист», – çапла хакларĕ ăна прораб. В. И. Абрамов хăй вăхăтĕнче юсавпа строительство управленийĕн тĕп инженерĕн тивĕçне тĕплĕн пурнăçланине халĕ те ăшшăн аса илетпĕр-ха. «Йышпа мар, ăсталăхпа!» – строительсем çак чĕнĕве тĕпе хурса ĕçлеççĕ. Кашниех темиçе специальноçа алла илнĕ. Тăрăшулăхне кура – укçи те. Пирĕн ыйтăва хуравласа, А. А. Кипайкин: «Пăшăрханмастпăр. Ĕç укçи уйăхран уйăхах ӳссе пырать», – терĕ.

Прорабăн ĕç пӳлĕмĕнче вăрах лармарăмăр. Строительство анлăн сарăлнă çĕрте те пулса куртăмăр. Кирпĕч хуракансен ĕçĕпе киленсе тăтăмăр пĕр хушă. Вĕсенчен пĕри – Всеволод Семенович Миронов. Йĕпреçре нумай хутлă пурăнмалли çурт сахал мар çĕкленĕ вăл. Ун пирки ырласа калаçнине çеç илтетĕн. Ылтăн алăллă çын. Хăвăрт, пахалăхлă ĕçлет, кунсеренех нормăна ирттерсе тултарать. Пурте çыпăçуллă пулса пырать унăн. Тахçанах пенсире ĕнтĕ, анчах кану çинчен шухăшламасть те. «Пĕлтерĕшлĕ объекта вăхăтра ĕçе кĕртесси – пирĕн тĕп тĕллев, – кăмăллăн пĕлтерчĕ Всеволод Семенович. – Çамрăксем комплекс хута каяссине епле чăтăмсăррăн кĕтни паллă пирĕншĕн. Федераци хамăра уйăрса панă укçатенке пĕтĕмпех ĕçе кĕртес тетпĕр...»

Стройкăра район пуçлăхĕ А. И. Петров тата капиталлă строительство пайĕн пуçлăхĕ В. Г. Пименов кашни кун тенĕ пекех пулаççĕ, ĕçсем мĕнле пынипе кăсăкланаççĕ, ырă канашпа та, усăллă сĕнӳпе те пулăшаççĕ.

Пирĕн физкультурăпа спорт комплексĕнче тĕлĕнмелле залсем тата шывра ишмелли икĕ бассейн, ытти пӳлĕмсем пулаççĕ. Кермен кăçалхи чӳк уйăхĕн вĕçĕнче хăйĕн алăкĕсене яриех уçса ямалла. Района туса хунăранпа 80 çул çитнĕ ятпа хатĕрленĕ чи чаплă парне пулĕ вăл.

Республикăра иртнĕ çул çавăн пек 6 комплекс ĕçе кĕнĕ. Кăçал пиллĕк çĕкленсе лармалла. Вĕсенчен пĕри – Йĕпреçре. Сывлăх керменĕ район центрĕнчи чи илемлĕ, хăтлă çурт пулĕ. Ăна хăй пекех янравлă ят тупса парсан вырăнлăччĕ те... Çав ята, ман шутпа, тăван тăрăх историйĕпе çыхăнтарсан лайăх пулмалла. Сăмах май каласан, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ «Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ» АХОн генеральнăй директорĕ В. В. Свешников ку çулталăк пуçламăшĕнчех конкурс ирттерме, киленӳллĕ ят тупса паракана укçан премми парса хавхалантарма пулни çинчен пĕлтернĕччĕ. Тупăшăва хутшăнас текенсене хăйсен пултарулăхне тĕрĕслесе пăхма чĕнетпĕр.

Строительсене хăйсен професси уявĕ ячĕпе саламласа, тĕллевсене ĕçпе çирĕплетме ырлăх-сывлăх сунатпăр эпир. Вĕсен праçникĕ ыран, çурла уйăхĕн 12-мĕшĕнче. Строительсем паян вара Физкультурниксен кунне паллă тăваççĕ. Строительсемпе физкультурниксене хальхи вăхăтра пĕр тĕллев пĕрлештерсе тăрать-çке. Апла пулсан, сывă пурнăç йĕркисене халăх хушшинче сарма пулăшас тĕллевпе ырă та пархатарлă ĕç тăвакан строительсене спортсменсен уявĕ ячĕпе саламлă сăмах калани питех те вырăнлă.

***Г. ВАСИЛЬЕВ.***

**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** физкультурăпа спорт комплексĕ хальхи вăхăтра çапла курăнать; строительсен ушкăнĕ.

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕсем.***



ЮБИЛЕЙ

# «ТĂВАН ЯЛ – СЫВЛА КАЛ-КАЛ!»

Пирĕн республика картти тăрăх шухăшпа тӳрĕ йĕр туртсан, эсĕ пĕр вĕçĕпе «çеçен хире», теприннпе вăрмана çитсе тухатăн. Вĕççĕр-хĕрсĕр туйăнакан тавралăхра, ĕмĕрхи юмансемпе пăхăр тĕслĕ хырсем тата шап-шурă уралла хурăнсем çавăрса илнĕ çĕрте вырнаçнă та Эконом ятлă тĕлĕнмелле поселок. Темĕн, пĕтĕм Раççейĕпе шырасан та çав ятлă ялпоселока та тупаяс çук. Ăна никĕслекенĕ тата çав ята парса чыслаканĕ, ахăртнех, тирпейлĕхпе перекетлĕхе тĕпе хуракан çын пулнă ĕнтĕ.

Çĕр çинчи çăтмах кĕтес. Çаплах калас килет кунти вырăнсене. Экономра пурăнакансем паян хăйсене телейлĕ те савăнăçлă тытаççĕ. Вĕсем, уяв тумĕпе капăрланса, йăлтăр куллисене çуталтарса, иртнĕ шăматкун, çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче поселокри клуб умне, йĕри-тавра çăкасем илем кӳрекен парка хăйсен пĕчĕк «тăван çĕршывĕн» юбилейне – поселок пуçланса кайнăранпа 80 çул çитнине чысласа ирттерекен савăнăçлă уява килчĕç. Çынсен куçĕсенче – мăнаçлăх, хавхалану, сăмахпа каласа парайми туйăм. Вĕсем, пĕр-пĕрне ăшшăн саламласа, ырлăх-сывлăх суннă май, алă параççĕ. Çак тапхăрта пĕрлехи йышпа мĕн чухлĕ ĕç тунă вĕсем! Пурне те – телейсавăнăçне те, хуйхи-суйхине те пĕрле пайланă. Уявра, чылайранпа курман пек пĕр-пĕрин çине ăмсанса та илĕртӳллĕн пăхаççĕ хăйсем. Пĕрле, çума-çумăн тăрса, пĕр колхозра ĕçлесе, уй-хирте тырă ӳстернĕ фермăсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ. Халĕ вĕсене хĕвеллĕ çул кунта савăнма илсе килнĕ.

Вăрманта вырнаçнă поселок çыннисем çакна лайăх ăнланаççĕ: çын хăй пĕччен мар чухне, ыттисемпе пĕрле килĕшӳллĕн те пуçаруллăн пурăннă чухне кăна вăйлă, çавăн пек йыш кирек мĕнле йывăрлăхсене те парăнтарма пултарать.

Ял юбилейне халалланă савăнăçлă пухăва Кирово ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. П. Егоров уçрĕ. Вăл çак ятпа пурне те саламласа ырлăх, ĕçре ăнăçусем тума сывлăх сунчĕ. Гимн кĕввипе çĕкленекен ялава флагшток çине çирĕплетсе лартма ял-йыш хăйсен мухтавлă ентешне, отставкăри полковника Николай Юлмасова шанчĕ. Николай Егорович чылай çул хушши Байконурти космодромра ĕçленĕ, Раççейĕн пур космонавчĕсене те лайăх пĕлет вăл. Ку тăрăхри паллă таврапĕлӳçĕ, Пăкăян шкулĕнче ачасене пĕлӳ паракан А. Н. Терентьева туса панă кăсăк доклада уява килнисем аваллăхран паянхи куна сыпăнтаракан çулçӳрев вырăнне хурса хакларĕç. Кашнин куçĕ умнех çавăн чухне кунти вырăнсене чи малтан куçса килсе ял йĕркелеме шикленсе ӳкмен хĕрӳ чун-чĕреллĕ çынсен сăнарĕсем тухса тăчĕç ĕнтĕ.

Уявăн хисеплĕ хăнине – район администрацийĕн капиталлă пайĕн пуçлăхне В. Г. Пименова сăмах пачĕç. Вăл хăй тата район пуçлăхĕ ячĕпе поселок çыннисемпе хăнасене юбилей саламĕ каларĕ, Экономра çуралса ӳснĕ икĕ çынна – Иосиф Васильевич Арсентьевпа Семен Петрович Федорова районăн Хисеп грамотине парса чысларĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. П. Егоров яла тирпей-илем кӳрес ĕçе хастар хутшăнакан 6 çынна Хисеп грамоти, вуннăшне тав çырăвĕ пачĕ. Поселокри чи ватă çынсем те чыслава тивĕçрĕç. Николай Николаевич Николаевпа Анастасия Ивановна Васильева ĕмĕр çулне шанчăклăнах малалла такăрлаççĕ иккен.

Антонинăпа Михаил Николаевсем вара хăйсем туй туса пĕрлешнĕ вăхăта аса илчĕç. Çавăнтанпа шăпах çур ĕмĕр хыçа юлнă-çке. Ял-йыш мăшăра «ылтăн туй» ячĕпе саламлани вĕсен кăмăл-туйăмне çĕклерĕ ĕнтĕ.

Поселокри чи пĕчĕк чун Ваня Михайлов, сăпкаран аннă-анманах, «паллă çын» пулса тăчĕ, уявра унăн ашшĕпе амăшĕ те парне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Экономăн чи пĕчĕк гражданинĕ телейлĕ ӳсесси иккĕлентермест никама та.

Экономри чи маттур çынсенчен пĕрин – Владимир Михайлович Николаев ячĕпе те ăшă сăмах нумай каларĕç уявра. Вăл тăрăшни, çине тăрса тимлени поселок сăн-сăпатне палăрмаллах илемлетме май панă.

Пĕчĕк поселок малаллах талпăнать-ха. Юбилейчĕн кăшт маларах кăна Федоровсен çемйинче йĕкĕреш ача сасă панă. Вĕсен ашшĕпе амăшне те, çавăн пекех уявпа пĕр вăхăтра хăйсен çуралнă кунĕсене паллă тăвакан Валерий Петровпа Денис Иванов тата Александр Чесноков та ял тăрăх пуçлăхĕн аллинчен парнесем туянчĕç.

Педагогика ĕçĕн ветеранĕ Татьяна Ефимовна Степановапа халăх сывлăхне сыхлас енĕпе нумай çул ăнăçлă тăрăшакан Маргарита Алексеевна Рускова та, хăйсен ячĕпе тухнă ăшă-ăшă сăмахсем хыççăн, савăнăç куççулĕсене шăлса илме именмерĕç.

Чылай çын парне илсе кайрĕ уявран. Кирово лесничестви (лесничийĕ – В. Н. Мосолов) тата Киров ячĕллĕ колхоз правленийĕ (ертӳçи – В. И. Шуркин) хăйсем ертсе пыракан коллективсенчи маттур çынсене хавхалантарма грамотăсемпе парнесем хатĕрленĕ.

Юбилей уявĕн хисеплĕ хăнисем – Йĕпреç поселокĕнчи Р. Г. Июдинапа Л. А. Петрова та парнесемсĕр килмен. Вĕсем поселокри кăтартуллă кил-хуçалăхсене хавхалантарма май тупнă.

Ĕçчен, пултаруллă çынсене мухтакан савăк юрăкĕвĕсĕр уяв иртет-и? Поселок çийĕн чылайччен чуна лăпкакан çемĕсем юхса шăранчĕç çав кун. Шупашкартан килнĕ «Янташ» ансамбль (ертӳçи – Анатолий Никитин композитор, экономсен ентешĕ) кăтартнă шоу-концертăн кашни номернех хыттăн алă çупса йышăнчĕç куракансем.

Спорт ăмăртăвĕсем те хĕрӳ иртрĕç. Суту-илӳ тытăмĕнче ĕçлекенсем сĕнекен таварсене туянакансем йышлă пулчĕç. Уяв çыннисене какай шӳрпипе тараватлăн сăйларĕç.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

## САЛАМЛАТПĂР



Çĕр çинчи чи çывăх, чи юратнă çыннăмăра, кун çути парнеленĕ аннене, ырă кăмăллă асаннене, хисеплĕ хунямана – Пучинкере пурăнакан **Елена Васильевна АЛЕКСАНДРОВАНА** – пĕтĕм кăмăлтан, ăшшăн та тараватлăн çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей, хурçă шанчăк, таса сывлăх, сӳнми юрату сунатпăр.

Кăмăлу сан ырă, хĕвел пек куллу,
Ял-йышра хисеплĕ, чыслă çемьере.
Малашне те ырă пултăр пурнăçу,
Чирлемесĕр çит эс пурăнса 100е.

***МИРА, МИЛА, ДИМА, ИРИНА, ИЛЕМПИ, АТНЕР.***

Чĕвĕлти чĕкеç пек хĕрĕме, ырă сĕнӳ, вырăнлă канаш парса пулăшу парсах тăракан аппамăра, йăмăка, ылтăн пек ыр çыннăмăра, тус-тантăша – Пучинкери **Елена Васильевна АЛЕКСАНДРОВАНА** – пĕтĕм чун-чĕререн юратса, чĕре çумне ăшшăн çупăрласа, ырă ĕçĕсемшĕн пуçа тайса çуралнă кунĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей те ăраскал сунатпăр.

«Сан сывлăху çирĕп, тĕреклĕ пултăр,
Çăлкуç пек тăтăр вăй тапса.
Телей хĕвелĕ саншăн çунтăр», –
Çапла калатпăр ыр сунса.

***АМĂШĔ, 2 ШĂЛЛĔ, ЙĂМĂКĔ, КИНĔСЕМ, ÇЫВĂХ ЮЛТАШĔ ЛЮДМИЛА.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

От всей души и доброго сердца поздравляем исполнительного директора СПОКК «Ибреси – Согласие» **АЛЕКСАНДРОВУ Елену Васильевну** (с. Новое Чурашево) с очередным днем рождения, желаем ей крепкого здоровья, неиссякаемой энергии, целеустремленности, благополучия, домашнего тепла, претворения в жизнь всех своих заветных планов, счастья, радости, веселья и бодрости, жить лет до ста без старости.

***Коллективы Ибресинского представительства ОАО «Страховая компания «Чувашия – Поддержка» и СПОКК «Ибреси – Согласие».***

## САЛАМЛАТПĂР

Пурнăç çулĕпе юнашар алла-аллăн тытăнса утма суйласа илнĕ чи хаклă та юратнă мăшăра, аннене, аппана, хунемене, çывăхран çывăх тăвана – Хумпуç Патăръелĕнче пурăнакан, «Ибресинская» агрофирмăра ĕçлекен **Надежда Васильевна ВАСИЛЬЕВАНА** нихăçан манăçми паллă кунпа – çуралнăранпа çур ĕмĕр çитнĕ ятпа ушкăнпа хĕрӳллĕ те çепĕç салам янă май, çăлкуç таппи пек иксĕлми сывлăхпа вăйхал, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем, кил-йышра тăнăçлăхпа тивлетлĕх, килĕшӳлĕхпе юрату, ачисен савăнăç-телейне пĕрле пайлама, ăнăçу хыççăн ăнăçу сунатпăр.

Пĕр чарăнмасăр чупакан çулсем
Сан юбилей çитни çинчен калаççĕ.
Çул иртнине эс ху пач ан сиссем,
Яланлăхах хальхи пекех юлсамччĕ.

***МĂШĂРĔ, АЧИСЕМ, ЙĂМĂКĔСЕМПЕ КĔРӲШĔСЕМ, ШĂЛЛĔН ÇЕМЙИ, ТĂВАНĔСЕМ.***



# ЙĔПРЕÇ, ЮРЛАТПĂР САН ÇИНЧЕН!

(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.).

Поселока тирпейлес тата илемлетес тĕлĕшпе ирттернĕ конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем те паллă пулчĕç уявра. Промышленноç предприятийĕсен хушшинче Йĕпреçри психоневрологи интерначĕ пĕрремĕш, Федераци налук службин пирĕн республикăри 3-мĕш номерлĕ налук службин районти инспекцийĕ – иккĕмĕш, Йĕпреçри Ветерансен çурчĕ виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç. Уйрăм килхуçалăхсенчи симĕс илеме кăмăллакансен тупăшăвĕнче вара (конкурсăн пĕр номинацине çав тĕллевпе çыхăнтарнă) Людмила Яковлевнăпа Геннадий Порфирьевич Владимировсем çĕнтернĕ иккен. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Елена Александровнăпа Игорь Ильич Николаевсем тата Римма Григорьевнăпа Юрий Аркадьевич Июдинсем.



Уявăн иккĕмĕш пайĕнче халăха Йĕпреç хула тăрăхĕн культура çуртĕнчи халăх коллективĕсем, уйрăм юрăçсемпе ташăçсем, чăваш эстрадин «çăлтăрĕсем» (вĕсене Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Сергей Павлов ертсе пычĕ) хăйсен концерчĕсемпе савăнтарчĕç.

Каçхине, поселок çийĕнчи тӳпере йăлтăр çăлтăрсем çуталса кайсан, ватти-вĕтти таранах Черноречка микрорайонне çул тытрĕ. Хура шыв çийĕн уяв фейерверкĕ салатнă ахах-мерчен «çăлтăрсем», тавралăха килĕшӳллĕ илем кӳрсе, пĕвене умлăн-хыçлăн ӳксе çухалчĕç.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***



**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне В. Михалика «Йĕпреç поселокĕн хисеплĕ гражданинĕ» ят парса чысларĕç; Галина тата Григорий Кольцовсене районăн Хисеп грамотине илнĕ ятпа саламлаççĕ; ветерансен хорĕн членĕсем хăнасене çĕнĕ юрăпа пуллаштараççĕ.

***Д. ДИМИТРИЕВ /фото/.***

## САМАХКАÇМĂШ




**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА**: 1. Чăваш сăвăçи. 3. Политика юхăмĕ. 8. Çар хатĕрĕ. 13. Полиграфистсем сăнӳкерчĕке çапла калаççĕ. 14. Хваттерпе хваттере уйăракан «чикĕ». 15. Çурални çинчен панă документ. 19. Каç сăнĕ çапнă вăхăт. 20. Чăвашра чи анлă сарăлнă хушамат. 21. Лафет, станок. 22. Хурт-кăпшанкă. 24. Çыннăн япăх енĕсене палăртакан туртăм. 25. Ĕç тумтирĕ. 29. Чăвашсен паллă писателĕ. 30. Уйăн куç пур, вăрманăн – ... 31. Йĕпреç райхаçатĕнче ĕçленĕ Валентин Удаловăн хушма хушамачĕ. 32. Карттăсен «кĕнеки». 33. Чăвашсен пĕрремĕш балечĕ. 34. Мари çĕрĕ çинчи юханшыв. 35. Алексей Талвир çырнă «Пăва çулĕ çинче» повеçри сăнар. 36. Пушкин вăхăтĕнче палăрнă сăвăç. 40. Пĕчĕк ту. 45. Рекламăра час-часах асăнакан «тавар». 47. Çутçанталăк пулăмĕ. 48. Америкăри штат. 49. Çурçĕрти поляр «облаçĕ». 53. Çурхи пĕрремĕш «хыпарçă». 54. Ӳпке-пĕвер. 55. Хĕрача ячĕ. 56. Музыка хатĕрĕ. 57. Панулми сорчĕ.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Шатра чирĕ. 2. Çар хатĕрĕ те, космоса вĕçекен техника та. 4. Православи тĕнне тытакансен кĕркуннехи праçникĕ. 5. Кондитер изделийĕ. 6. ... Юн, чăвашсен пĕрремĕш артистки, драматург. 7. Çынна тĕс тăрăх палăртни. 9. Атте амăшĕ. 10. Карелсен эпосĕ. 11. Пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе ĕçлени. 12. Чăваш сăвăçин Василий Кошкинăн хушма хушамачĕ. 16. Пĕр енчи çын. 17. Ĕçлемесĕрех илсе тăракан тупăш. 18. Çын аллипе тунă шыв çулĕ. 23. Çын кăмăлĕн кĕвĕçӳ туйăмĕ. 26. Предприятири чи кирлĕ çын. 27. Тĕл тивертекен. 28. Вырăсла – Афанасий, чăвашла – ... 35. Литературăра: пысăк хуласен пурнăçне сăнласа пани. 37. Май, меслет. 38. Хăратса пуякан вăрă. 39. Вăрманта пурăнакан кайăк. 41. Килти «транспорт». 42. Мускав облаçĕнчи торфлă вырăн. 43. Ял тăрăхĕн пуçлăхне çапла чĕнеççĕ. 44. Чăвашсен паллă писателĕ. 46. Вăрçăра пуç хунă чăваш сăвăçи. 49. Çывăх тăван. 50. Кавказри юханшыв. 51. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи хула та, юханшыв та. 52. Пӳрт-çурт пайĕ.

### ХАÇАТĂН 62-МĔШ НОМЕРĔНЧЕ ПИЧЕТЛЕННĔ САМАХКАÇМĂШ ТУПСĂМĔСЕМ

**Сулахайран сылтăмалла.** 1. Тăлă. 3. Валентина. 8. Бард. 13. Рункă. 14. Валак. 15. Çатрака. 19. Тенкел. 20. Кантăк. 21. Атакама. 22. Лаша. 24. Коловорот. 25. Тост. 29. Кавăн. 30. Шанкă. 31. Халат. 32. Алтын. 33. Пьеса. 34. Иркка. 35. Авăн. 36. Хавхалану. 40. Тура. 45. Уретник. 47. Раввин. 48. Анкара. 49. Кăвакал. 53. Тисса. 54. Ăскăч. 55. Алик. 56. Салакайăк. 57. Акка.

**Çӳлтен аялалла.** 1. Теветкелĕ 2. Ларина. 4. Анăç. 5. Енот. 6. Тута. 7. «Нева». 9. Аркату. 10. Демократ. 11. Анкета. 12. Албани. 16. Аттил. 17. Рыков. 18. Кăмăр. 23. Афанасьев. 26. Сыктывкар. 27. Анаткас. 28. Ашмарин. 35. Андреева. 37. Вăрçă. 38. Астра. 39. Анива. 41. Арматура. 42. «Анисса». 43. Кĕнеке. 44. Австри. 46. Карчăк. 49. Ката. 50. Вата. 51. Купа. 52. Лăсă.



## ПОЗДРАВЛЯЕМ

Дорогого, любимого мужа, внимательного и заботливого отца, дедушку, дядю, лучшего друга семьи – **КАЛИНИНА Юрия Михайловича**, проживающего в п. Ибреси, – от всей души горячо и сердечно поздравляем с замечательным юбилеем, 60-летием!

Пусть в день рожденья твоего
Тепло семьи тебя согреет.
Ведь с ним не страшно ничего:
Хоть снег идет, хоть дождик сеет!
Мы пожелать тебе хотим
Всегда весны – зимой и летом,
Улыбок, счастья и добра,
Прожить на свете лет до 100!

***Любящие ЖЕНА, 2 СЫНА, СНОХА, ВНУЧКА ЛИЗА, ПЛЕМЯННИЦЫ КАТЯ И ВАЛЯ, ТАИСИЯ СТЕПАНОВНА.***

**ООО «ВОЛЖСКИЙ КИРПИЧ»**

**ТРЕБУЮТСЯ: электросварщики, операторы пресса, операторы автомата укладчика, транспортировщики, загрузчики и выгрузчики тунельной печи, электрики, водители, машинист экскаватора, машинист бульдозера, слесари, токари.**

**Телефон: 2-18-04.**

**ООО «ИБРЕСИНСКОЕ РТП»**

***ТРЕБУЮТСЯ:***

**- главный бухгалтер; технолог по обработке металлов резанием; инженер-технолог машиностроения; автослесарь по ремонту легковых автомобилей с опытом работы по рихтовке и покраске; тракторист на трактор К-700; размер заработной платы при собеседовании.**

**Обращаться по адресу: п. Ибреси, ул. СХТ, д. 13. Телефон: 2-16-12.** 3-1

**МУЗ «Ибресинская ЦРБ» выражает глубокое соболезнование санитарке терапевтического отделения Федоровой А. А. по поводу преждевременной смерти ее мужа ФЕДОРОВА Александра Васильевича.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*За главного редактора БЫКОВА С. В.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

**Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР**

**Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6**

**ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП “Вурнарский издательский дом”: 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.**

**Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.**

**Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП “Вурнарский ИД”. Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3274: чув. – 2422, русск. – 852. Зак. №**

**Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ**

**Срок сдачи в печать — 17.00**

**Сдан в печать в 10.00**

**Ответственный за выпуск Кузнецов Г. В.**